* * *

Анне мана тирпейлӗ пиеленӗ,
Сиктернӗ лăнкăр-лăнкăр сăпкара,
Чӗкеç вӗçнисене курса пилленӗ
Çемçен те чӗвӗл-чӗвӗл калаçма
Ачаранах ӗмӗрлӗхе
Чăваш чӗлхи, тăван чӗлхе.

Хирте çилсем турта çинче силленӗ,
Сиктернӗ манăн çăмăл сăпкама,
Кӗрленӗ аслати те, çиçӗм те çӳренӗ,
Кăвар тăкса шăратнă куçăма.
Вӗсем мана хăр хӗнлӗхе
Ентме вӗрентнӗ вут чӗлхе.

Юратнă эп, ача чухне итленӗ
Янравлă шăнкăр-шăнкăр çăл шывне.
Кайран вара мана пырса иленнӗ

Хĕре ыталаса пĕччен чухне
Савса калаçнă чухнехи
Ачаш чĕлхе, чăваш чĕлхи.

Вăрçа кайма юри ман ят хисепĕ
Тухассине кĕтми ăсантăм та
Шинеллĕ халăха итлерĕм эпĕ.
Ытти чĕлхесемпе пĕрле унта
Кăларчĕ ялкăшса хĕлхем
Чăваш чĕлхи, хаяр чĕлхем.

Пуçна ан ус, ан пул нихçан мăнтарăн,
Ĕçчен чăваш ятне тиркекене,
Харамçă пырсене силле хаяррăн,
Питле улталакан чĕресене,
Çунтар пур мĕскĕн нишлĕхе,
Чăваш чĕлхи, кăвар чĕлхе!

Пĕве каймасть пĕр йывăç та туратсăр,
Çунатсăр кăйкăр кайăк вĕçтĕр-и? —
Çаплах вăй-халсăр пулăп эпĕ сансăр.
Тытса калатăн эсĕ чĕремри
Ман çитмĕл çичĕ хĕлĕхе,
Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе.

*1957*